Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

33 (7673) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи апрелĕн (ака) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Кĕскен**

## Сĕт сутма - хулана

Шупашкар хулинче 39 вырăнта сĕте висĕпе сутма ирĕк панă. Çакăн пек хушăва хула пуçлăхĕ ăнсăртран ала пусман. Сăлтавĕ – хула çыннисем патне сĕте хаклă мар хакпа çитересси тата ял ĕçченĕсене продукцие вырнаçтарма майсем туса парасси.

Пирĕн районтан тĕп хулара çак паха çимĕçе «Вита» предприятийĕ сутни паллă. Сĕте кунта 1 литрне 15-17 тенкĕпе сĕнеççĕ. Ял халăхĕнчен ăна 7 – 5 тенкĕпе йышăннине шута илсен, хулана тухни тупăшлă пулмалла.

## Сире справочник кирлĕ-и?

Районăн телефон справочникне хатĕрлекен комиссирен ĕçе хăвăртлатма кирлине пĕлтерчĕç. Унсăрăн кĕнеке тухасси иккĕленÿллĕ. Уйрăм çынсен те, предприяти, хуçалăх, учреждени ертÿçисен те кирлĕ сведенисене çак кунсенчех пĕлтермелле. Справочник хатĕрлес ĕç кăткăссине пурин те ăнланмалла. Ыйтса пĕлмелли телефон: 62-8-96.

**Ĕçре хастаррисем**



*Районти вĕрентÿ тытăмĕнче пурĕ 499 учитель вăй хурать. Вĕсенчен чи маттуррисемпе пултаруллисем апрель уйăхĕнче «Çулталăкри учитель» професси конкурсне хутшăнчĕç. Виçĕм кун çак конкурсăн финалĕнче тĕрлĕ номинацисен çĕнтерÿçисем паллă пулчĕç. Эсир вĕсене сăн ÿкерчĕкре куратăр: П.П. Кожевникова (Нискассинчи вăтам шкул), Н.Р. Иванова (Орининти вăтам шкул), А.В. Бельская (Йÿçкассинчи вăтам шкул), конкурс çĕнтерÿçи А.Г. Паладьева (Муркашри вăтам шкул), Т.А. Ершова (Калайкассинчи вăтам шкул), Л.Н. Кудашова ( Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул) тата В.Н. Волкова (Москакассинчи вăтам шкул). Ачасене вĕрентсе воспитани парас ĕçре çакăн пек хастар ĕçченсем пулни малаллах туртать, çĕнĕ шухăш-ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме пулăшать.* **Н. НИКОЛАЕВА сăн ÿкерчĕкĕ.**

**Çур аки – 2009**

## Хирсенче ĕçсем пуçланчĕç

Умра – Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнчи черетлĕ çурхи уй-хир ĕçĕсем. Епле иртерĕпĕр ăна, умри задачăсене мĕнле татса парăпăр – нумай килĕ çакăнтан хуçалăхсен тăнăçлăхĕ те.

Апрелĕн 21-мĕшĕ тĕлне вара Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕнче кĕрхи культурăсене 130 гектар, Толстов хуçалăхĕнче 47 гектар, Ямангеев хуçалăхĕнче 15 гектар çинче минералла удобренисемпе апатлантарнă.

«Ударник» хуçалăхра вара нумай çул ÿсекен курăксене 100 гектар çинче сÿреленĕ тата минералла удобренисемпе апатлантарса хăварнă.

Ĕçсем пуçланчĕç.

**Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн**

## Ырă йăлана пăрахăçлар мар

Паллă ĕнтĕ, çурхи кунсем çитсе килнĕ май хĕл каça юр айĕнче пухăнса пынă пĕтĕм тасамарлăх, тирпейсĕрлĕх çиеле тухать. Çавна май чăвашсен авалтанпах ырă йăла пулнă: тавралăха варалакан çак йĕркесĕрлĕхе пуçтарса тирпейлемелле. Çак ĕçе вĕсем никам хушмасăрах пурнăçланă. Тирпей-илем хамăршăнах вĕт-ха. Кил-çурт, картиш тавралăхĕсене пуçтарса хăт кĕртнĕ.

Халĕ вара пирĕнтен хăшĕсем çак ырă йăла çине ала сулаççĕ пулас. Тавралăха тирпейлес енĕпе йĕркеленĕ санитарипе экологи субботникĕн малтанхи кăтартăвĕсем те çавна çирĕплетеççĕ.

Иртнĕ эрнере субботник йĕркелерĕмĕр. Муркаш шкулĕсĕр, район сучĕсĕр, налук инспекцийĕсĕр, «Россельхозбанксăр», суд приставĕсен кантурĕсĕр пуçне район центрĕнчи ытти предприятисемпе организацисенче субботник активлă иртрĕ.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче ял тăрăхĕн территорийĕнчи Малиновка, Çĕньял Муркаш, Çурлатри, Шаптак ялĕсенче те субботник пулчĕ.

Район центрĕн территорийĕнчен пĕтĕмпе 30 тонна çÿлсем çинчи хăйăр тасамарлăхне, 15 тонна йăла каяшне, ытти ялсенчен 30 тонна тасамарлăх тиесе тухнă.

Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн тăрăшасси пĕр кунлăх ĕç мар. Çакна манас марччĕ никамăн та.

**Н. НИКИТИН,**
**Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.**

**Уявсем умĕн**

## Пĕр кун та уяв мероприятийĕсемсĕр иртмĕ

Çитес кунсем уявсемпе пуян. Вĕсене халалласа район шайĕнче сахал мар мероприятисем ирттерме пăхнă. Вĕсем пуçăннă ĕнтĕ, хыççăн та иртĕç.

**Апрелĕн 24-мĕшĕ – Чăваш чĕлхин кунĕ.** Ку куна халалланă мероприятисене районтан тухнă писательсене поэтсене, учительсене, чĕлхеçĕсене, шкул ачисене тата ыттисене те анлăн явăçтараççĕ. Библиотекăсенче, шкулсенче, Культура çуртĕсенче, музейсенче тĕрлĕрен литература каçĕсем, выставкăсем, конкурссем, концертсем, литературăпа музыка каçĕсем, тĕл пулусем, фестивальсем, олимпиадăсем, уçă урокосем, экскурссисем, писательсемпе поэтсен произведенийĕсен презентацийĕсем пулса иртеççĕ, район хаçатĕнче материалсем пичетленеççĕ.

**Майăн 1-мĕшĕ – Çуркуннепе ĕç уявĕ.** Çурхи кунсем çитнĕ май чи малтанах тавралăха тирпейлĕрех те илемлĕрех тăвас ыйтусене тĕп вырăна хураççĕ. Ку тĕлĕшпе вырăнсенче субботниксем тăтăшах иртеççĕ. Шкулсенче ачасен асфальт çинчи ÿкерчĕкĕсен конкурсĕсем пулаççĕ. Библиотекăсенче, шкулсенче тематика выставкисем йĕркелеççĕ, районти ĕç ветеранĕсем пирки информаци буклетне хатĕрлеççĕ. Майăн 1-мĕшĕн кунне халалласа ачасен уявĕ, çуллахи спорт сезонне уçнă май майăн 1-мĕшĕнче спорт уявĕ пулаççĕ, çав кунах вокалпа инструментсен «Картина» ансамблĕ уяв концерчĕ кăтартать.

**Майăн 9-мĕшĕ – Аслă çĕнтерÿ кунĕ.** Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерÿ тунăранпа 64 çул çитнине халалланă уяв мероприятийĕсен программи уйрăмах анлă. Вĕсене 3 пысăк ушкăна уйăрма пулать:

1. «Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен пурнăçĕн экономикăпа социалла условийĕсене лайăхлатассипе туса ирттерекен мероприятисем» шутĕнче заявкăсемпе таварсене вăрçă участникĕсем патне киле çитерсе парасси те, уяв кунĕнче вĕсене йÿнĕрех хаксемпе тивĕçтерекен таварсен шутне ÿстересси те, вăрçă участникĕсене таварсемпе тивĕçтерекен суту-илÿ предприятийĕсене юсав ĕçĕсем туса ирттерме, территорисене тирпей-илем кĕртме пулăшасси те, ветерансене чыслană вырăнсенче суту-илÿ йĕркелесси те, уяв кунĕнче ветерансене тÿлевсĕр апатлантарассине йĕркелесси те, инвалидсемпе участниксене тата çакна тивĕçлисене пĕр хутчен пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшасси те, вĕсен пурнăç условийĕсене тĕрĕслесе тăрасси те, çулталăкра пĕр хут вара комплекслă тĕрĕслевсем ирттересси те, эмелсемпе тивĕçтерессине лайăхлатасси те, комплекслă медицина тĕрĕслевĕсем ирттересси те, вĕсене шефа илесси те.

2. «Информаципе пропаганда тата асăну мероприятийĕсем» ушкăна кĕрекен мероприятисен ушкăнĕ те пĕчĕк мар пĕтерĕшлĕ мероприятисем. Вĕсем вăрçă ветеранĕсем, Аслă Çĕнтерĕве халалласа ирттерекен мероприятисем пирки материалсем, аса илÿсем пичетлесси, документсем пухассине йĕркелесси, паттăрлăх урокĕсене, тематика выставкисене, шкул ачисен ÿкерчĕкĕсен выставкисене, ветерансемпе тĕл пулусем, турнирсемпе çар вăййисем, уçă урокосем, спорт ăмăртăвĕсемпе районти наукăпа практика конференцине ирттересси.

3. «Уяв мероприятийĕсем» шутĕнче саламлă открыткăсем ярса парасси, ветерансене саламлассине, уяв концерчĕсемпе литература каçĕсене йĕркелесси, митингсемпе ытти мероприятисем ирттересси.

Пĕр сăмахпа каласан, уяв кунĕсене халалланă мероприятисемсĕр пĕр кун та иртмĕ темелле.

**А. АНДРЕЕВА,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ.**

**РФ Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ**

## Ача амăшĕн капиталĕпе усă курса

Чăваш Республикипе РФ Пенси фончĕн республикăри управленине кăçалхи икĕ уйăхра ача амăшĕн капиталĕпе çуртйĕр условийĕсене лайăхлатассипе пĕтĕмпе 200 миллион тенкĕлĕх 700 ытла заявлени тăратнă. Çак вăхăтра РФ Пенси фончĕн республикăри управленийĕ 200 ытла заявление пĕтĕмпе 55 миллион тенкĕлĕх ытла тивĕçтернĕ.

Ытти регионсемпе танлаштарсан, Чăваш Енре пурăнакансем пурăнмалли çурт-йĕр кредичĕсен парăмĕсене ача амăшĕн капиталĕ шучĕпе саплаштарассин мелĕпе анлăн усă кураççĕ. Çакă вăл республикăра пурăнмалли çурт-йĕр политикипе те çыхăннă – строительство ĕçĕсен анлăшĕ тата ипотека программисен нумай енлĕхĕ, ăнлантару ĕçĕсене япăх мар туса пыни.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ кăçалхи 2 уйăхра ача амăшĕн капиталĕпе усă курасси пирки 21 заявлени йышăнчĕ. Ку вăл пĕтĕмпе 5,3 миллион тенкĕлĕх.

Патшалăх ачаллă çемьесене пулăшассипе тытса пыракан политика ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕ илес текенсен йышне ÿстерме пулăшать. Январь–февраль уйăхĕсенче Чăваш Республикипе кун пек заявленисене 1256 йышăннă е иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 25 процент нумайрах.

2007 çултан тытăнса Чăваш Республикипе ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене 11 пине яхăн панă. РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ача амăшĕн капиталĕн патшалăх сертификатне илме кăçалхи январь–февраль уйăхĕсенче 43 заявлени пынă. Иртнĕ çулхи çав вăхăтра ку хисеп 40-пе танлашнă. 2007 çулхи январь уйăхĕнчен тытăнса 2009 çулхи февраль уйăхĕччен управлени ача амăшĕн капиталĕ пирки 393 сертификат панă.

**Хамăр инф.**

**Çамрăксем валли**

## Патшалăх пулăшăвĕ пирки ан манăр

Ялта пурăнакан тата ĕçлекен çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсене çурт-йĕр çавăрас е туянас ĕçре патшалăх тĕрлĕ программăсене пурнăçа кĕртсе пулăшу панине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Кун пирки хаçатра та тăтăшах вулатпăр. Иртнĕ кунсенче вара çак ыйтупа кăсăкланакансем валли район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ Перекет банкĕн ĕçченĕсемпе тата «Моргаушская» МСО специалисчĕсемпе пĕрле ятарлă семинар йĕркелерĕ.

Кăçал та маларах пурнăçа кĕрсе пынă тĕллевлĕ программăсем хăйсен ĕçне татман. «2012 çулччен яла социаллă аталантарасси» программа, 2002-2010 çулсене планланă «Пурăнмалли çурт-йĕр» федераллă программăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограмма, «2002-2015 çулсенче çамрăк çемьесене çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса пама пулăшасси» республика шайĕнчи программа та пысăк пулăшу парасси куçкĕрет. Кунпа шăпах çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсем усă кураççĕ. 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Муркаш районĕпе çакнашкаллисем пурĕ 32 çемье.

Ялта пурăнакансен, ĕçлекенсен хăтлă çурт-йĕр çавăрасси – пысăк проблемăсенчен пĕри. Строительство материалĕсем хаклă, ĕç укçисем вара пĕчĕк. Çитменнине тата пурин те кредит илме майсем те çук. **Акă «2012 çулччен яла социаллă аталантарасси» патшалăх программипе** килĕшÿллĕн ялти çамрăк специалистсене тата çамрăк çемьесене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе пулса пырать. Камсем илме пултараççĕ-ха патшалăх паракан субсидисене?

Асăннă категорие 35 çул тултарманнисем кĕреççĕ. Мăшăрсенчен пĕри çак вăхăта çитмен, ял хуçалăх е социаллă сферăсенче 5 çултан кая мар ĕçлеме килĕшÿ тунă пулсан, çемье ялта пурăнать тата çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалла е çурт çавăрмалла пулсан, ял тăрăхĕн администрацийĕнче черете тăрасси пирки каламалла.

1 е ытларах ачаллă (усрава илнисем кĕреççĕ) тулли мар çемьесем те патшалăх пулăшăвне илме пултараççĕ. 35 çула çитмен, вĕренсе пĕтернĕ (аслă, вăтам тата пуçламăш професиллĕ пĕлÿ) е юлашки курсра вĕренекен çамрăк специалистсем çине те асăннă условисем сарăлаççĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**